Хуçалăхсенчи отчетпа суйлав пухăвĕсенче

# Ыррине шанса пĕрле ĕçлетпĕр

Черетлĕ ял хуçалăх çулталăкĕн пĕрремĕш уйăхĕ хыçа юлнă май районти ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе ытти харпăрлăх формиллĕ хуçалăхсем те иртнĕ çулхи ĕçсене пĕтĕмлетсе малашлăх планĕсене çирĕплетме ĕлкĕрчĕç ĕнтĕ. Çапла вара район пурнăçĕн кун йĕркине хуçалăхсенчи отчетпа суйлав пухăвĕсем тухрĕç. Хуçалăх ĕçченĕсем çулленех черетлĕ пухуран вăл çĕнĕ ÿсĕмсен никĕсĕ пуласса кĕтеççĕ-шанаççĕ. Анчах темĕнле ĕçлесен те йывăрлăхсем пирĕнтен хăпмаççĕ-ха. Çакна иртнĕ çул ăратлă выльăх ĕрчетессипе специализациленекен «Свобода» хуçалăх-завод та тÿссе ирттерчĕ. Пĕр йывăрлăх теприне çуратать. Дисквалификаци йĕркипе иртнĕ кĕркунне хуçалăх ертÿçине К. Сретинские пĕр çулталăкăха ĕçрен хăтарнă май хуçалăх турти хушшине тăнă Л. Яриков иртнĕ юн кун, февралĕн 11-мĕшĕнче, хуçалăхăн отчетпа суйлав пухăвне ирттерчĕ.

**Хуçалăхăн экономика лару-тăрăвĕ.** «Свобода» хуçалăхăн паянхи куна пур тĕп пурлăхĕ 45 миллион ытла тенкĕлĕх. Кăçалхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне хуçалăх счечĕ çинче 108 пин тенкĕ укçа пулнă. Хуçалăхăн парăмĕсем пысăк. Вĕсем çаксенчен пухăнаççĕ: пĕлтĕр илнĕ кĕске вăхăтлăх 4,5 миллион тенкĕ кредитран тÿлемелли юлнă 1,9 миллион тенкĕ; нумай вăхăтлăха илнĕ кредитран тÿлемелли татах 719 пин тенкĕ; сысна ферми валли илнĕ инвестици кредитĕнчен 6,2 миллион тенкĕ «ĕнсе çинче» ларать; лизинг парăмĕ – 2325 пин тенкĕ; реструктуризаци тунă парăмсем – 1435 пин тенкĕ; кредит парăмĕсем 6201 пин тенкĕ. Çак ларуран тухма пулать-и? Иртнĕ çул хуçалăх пĕтĕм продукцие 32 миллион ытла тенкĕлĕх сутнă пулсан, продукцин хăйхаклăхĕ 31813 пин тенкĕпе танлашнă. Ăратлă выльăхсемпе тата вăрлăхпа ĕçленĕрен хуçалăх иртнĕ çул бюджетран 7405 пин тенкĕ илнине тата ĕç укçи фончĕ 12800 пин тенкĕпе танлашнине пăхсан, парăмсен шурлăхĕнчен тухма майсем пурри курăнать.

– Çакна валли çирĕп йĕрке кирлĕ. «Çум курăкĕпе» кĕрешесси – пĕрлехи ĕç, – терĕç ыррине шанса пĕрле ĕçлес тĕллевлĕ Кашмашсемпе Çатракассисем.

Хуçалăхăн иртнĕ кĕркунне суйланнă ертÿçĕн Л. Яриковăн кун йĕркине тăратнă ыйтăвĕсенчен пĕри çак пуянлăха упраса хăварассипе çĕнĕ ертÿçĕ суйласси пулчĕ. Кун патне хуçалăх ĕçченĕсем çиччĕ виççе пĕрре касас шухăшпа пычĕç. Умра тăракан ĕмĕтсене пурнăçа кĕртме пирĕн мĕн пур-ха? Çак ыйту çине хурав шыраса пухăва пынисем малтанах кашни специалистăн отчетне итлерĕç, ăна сÿтсе яврĕç. Çавна май хуçалăх ĕçченĕсем умĕнче хуçалăхăн тĕп бухгалтерĕ Е. Замятина, тĕп инженерĕ И. Скворцов, тĕп агрономĕ А. Блинов, тĕп зоотехникĕ Е. Демьянова, зоотехник-селекционерĕ Н. Чаплина, тĕп ветврачĕ Э. Любимова тухса каларĕç. Вĕсем хуçалăхăн паянхи вăй-хăватне, унпа епле туллин усă курма май пуррине уçса пачĕç. Хуçалăхăн техника пур, выльăха тулăх хĕл каçарма апачĕ çителĕклĕ, çĕнĕ технологисене пурнăçа кĕртесси вăй илсе пырать. Хуçалăх производствинче иртнĕ çул 225 çын пулнă пулсан, вĕсенчен 174-шĕ тăтăшах ĕçе тухнă. Вĕсен уйăхри вăтам ĕç укçи пĕлтĕр 4740 тенкĕ пулнă. Пĕрлехи тăрăшулăхпа вĕсем 2009 çулта хуçалăх умĕнчи пысăк парăмсене тÿлесе татнă, анчах пурпĕрех ку лав тĕппипех пушанман-ха. Ăçта-ха çак «чăрмавăн» сăлтавĕ? Пурне те кăсăклантаракан ыйту çине хуçалăхри сăнав канашĕн председателĕ Александра Федоровна Анисимова тĕплĕ хуравласа анлă доклад туса пачĕ.

Иртнĕ çулхи ĕçсене тишкерсе хак панă хыççăн пухăннисем 2010 çулхи ĕçпе финанс планне çирĕплетрĕç. Ăна пурнăçа кĕртессипе туса ирттермелли ĕçсем пирки каларĕç.

Апла пулин те Кашмашсемпе Çатракассисене çак кун çĕнĕлĕхсене алла илсе пырса малалла хăйсене кам ертсе пырасси ытларах шухăшлаттарчĕ. Çавăнпа та кун йĕркинче ку ыйту патне çитсен Кашмашри Культура çуртĕнче чылай вăхăт шăплăх хуçаланса илчĕ – тĕрĕс те шанчăклă хурав тупма кашниех çиччĕ виççе пăхрĕ. Çавăнпа та хуçалăха малалла ертсе пыма район администрацийĕн пуçлăхĕн çумне, ял хуçалăх пайĕн ертÿçине Владислав Кириллович Ананьева шанасси пирки сăмах тухсан, залра ларакансем пĕр саслă пулса ăна хуçалăх тилхепине шанса пачĕç.

Кашмашсемпе Çатракассисем тунă çул тĕрĕс те шанчăклă пуласса эпир те шанатпăр, çĕнĕ ертÿçĕне ăнăçу сунатпăр.

А. ПЕТРОВ.

Ял çамрăкĕсен пурнăçĕнчен

# Турнирта палăрчĕç

Кăрлачăн 30-31-мĕшĕсенче Чикме хулинче унта бокс тĕсне никĕсленĕ боксера тата тренера А. Лаврова асăнса ирттернĕ бокс турнирне пирĕн районти С. Черкашин, О. Сютруков, М. Николаев тренерсем ертсе пыракан бокс секцийĕсене çÿрекен тĕрлĕ ялсенчи 11 çамрăк хутшăнчĕ. Хутшăнчĕç те Муркаш ен ятне спорт картлашки çинче тата çÿлерех çĕклерĕç.



– Ял ачисем çавнашкал ÿсĕмсем тунинчен тĕлĕнетпĕр тата вĕсемшĕн савăнатпăр. Кунпа пĕрлех вĕсен спортри çулĕ вăрăм пуласса шанатпăр, – терĕç черетлĕ тренировка вăхăтĕнчи кĕске калаçура С. Черкашинпа О. Сютруков тата М. Николаев тренерсем.

Çамрăксене вĕсем суйласа илнĕ çул çинче ăсталăх туптама пулăшакансен вара хăйсен вĕренекенĕсем тăвакан кăтартусемпе савăнма сăлтавĕ пур.

Акă çÿлерех асăннă турнирта кăна пирĕн районтан кайнă боксерсем – кун пекки халиччен пулманччĕ – пурте финала тухнă. Вĕсенчен 6-шĕ килĕсене ылтăн медальсемпе, 5-шĕ кĕмĕл медальсемпе таврăннă. Уйрăммăн илсен, рингран В. Павловпа В. Мешков, В. Борисов (Çатракассинчи вăтам шкул), Д. Грачев (Калайкасси), Н. Пегасов (Муркаш), Д. Ржанов (Отаркка) çамрăксем çĕнтерÿпе таврăннă. Çапла вара Муркашсем район тулашĕнче те Муркаш ятне çÿлте тытнă. Район командине эсир паянхи сăн ÿкерчĕкре куратăр.

Çак ăмăрту иртнĕ вăхăтрах пирĕн тепĕр боксер С. Кожевников Чăваш Республикин пĕрлештернĕ командипе Тольятире Атăлçи Федераллă округĕн шайĕнчи ăмăртăва хутшăннă. Пирĕн ентеш унта ырăпа палăрнă вунă спортсмен хушшинче пулнă.

А. БЕЛОВ сăн ÿкерчĕкĕ.

Ĕненекенсен кĕтесĕ

# Тунти кунтан – Аслă типĕ

Православи тĕнне ĕненекенсен февралĕн 15-мĕшĕнчен Аслă типĕ пуçланать. Мĕн-ха вăл типĕ? Типĕ тытни вăл – чун аталанăвне тепĕр карт малалла утăмлаттарни. Типĕ пĕрремĕш тытакансене паракан 9 сĕнÿ:

1. Мăнкунчченех апат-çимĕçрен аш-какай, çăмарта, сĕт продукчĕсем кăлармалла.
2. Типĕ тытнине хăвăр организм ыйтнипе шайлаштарса пырăр.
3. Пулăна тата ытти тинĕс продукчĕсене Кăчăкă уявĕнче (пуш уйăхĕн 28-мĕшĕ) тата ун умĕнхи шăмат кун пулă вăлчине çиме юрать. Пĕрремĕш типĕ тытакансем, организм ыйтать пулсан, кун пурне эрне кунсăр пуçне, сайра-хутра пулă е, татах та сайрарах, йÿçнĕ сĕт те çиме пултараççĕ.
4. Типĕ тытатăр пулсан та çавна валли пăхнă апат-çимĕçе те виçесĕр çимелле мар.
5. Пылак çимĕç те типĕре ытлашши. Вĕсене питĕ виçеллĕ, вырсарни кунсенче çеç çиме ирĕк илме пулать.
6. Организм глюкоза ыйтать пулсан, сахăр çиме юрать, анчах сахăра улăштаракан препаратсем мар. Пыл типĕ тытнă вăхăтра çирĕп кунсенче те çиме юрать.
7. Сояран хатĕрленĕ «аш-какай» та – ултав çулĕ.
8. Типĕ тытни – уйрăм çын ĕçĕ. Ăна ыттисене вăйпа явăçтарни килĕшÿллĕ мар.
9. Типĕ тытнă вăхăтра апат-çимĕç çине пысăк тимлĕх уйăрманни те – ырă пулăм. Маларах асăннă правилăсене пăхăнса таса та сывă апат-çимĕçпе апатланни типĕ тытакансемшĕн усăллă çеç.

Февралĕн 15-мĕшĕ – Раççейри воин-интернационалистсен астăвăм кунĕ

# «Прапорщик юлташ, эпĕ чĕрĕ юлăп-ши?..»

Пирĕн асаттесем çапăçу хирĕнче пуç хурса та юн тăкса фашизма çăварлăхланă йывăр та тискер вăрçă çулĕсем историе тарăнрах та инçерех юлса пыраççĕ. «Ан пултăрччĕ вăрçă», – тетчĕç кăшт ĕлĕкрех фронтран сывă таврăннисем тата çак сăмахсем таврах ирттереççĕ калаçусене çав вăрçăн паян та пурăнакан ветеранĕсем. Ан пултăрччĕ вăрçă... Анчах... çĕр çинче ырăпа усал кĕрешнĕ чух вăрçă вут-çулăмĕ час-часах арçынсем тавра явăнать, ашшĕ-амăшĕне çывăх тăванĕсен куççульне юхтарать, çамрăксен малашлăх ĕмĕчĕсене хуçать.



Алексей Ефремов амăшĕпе Н. Курбатовапа пĕрле Афганистан хыççăн (1986 çул).

Çак сăн ÿкерчĕкре эсир Афганистан вут-çулăмĕ витĕр тухнă Муркаш енри интернационалист-салтаксенчен пĕрне Алексей Алексеевич Ефремова Афганистанран таврăнсан амăшĕпе пĕрле куратăр. Тепĕр сăн ÿкерчĕкре вара 18-20 çулсенчи пирĕн каччăсем фронтра апатланни куç умне тухать. Мĕн шутланă вĕсем çав вăхăтра? Паллах, пурнăç пирки тата вăрçă вут-çулăмĕ чарăнасси çинчен. Чуллă сăртри пĕчĕк окопра пĕр сĕтел хушшинче апатра ларакан çамрăк салтаксен ушкăнне пăхатăн та, чĕре хĕсĕнсе илет. Çемье çавăрса пурнăçа малалла тăсмалли каччăсем тăшман пульлисенчен хÿтĕленсе çăкăр пайлаççĕ... Хăйсем вара çаплипех шÿтлеççĕ.

... Вут-çулăм. Пĕчĕк кăвайт-и вăл е инçете-инçете курăнакан çапăçу хирĕн çути, анчах ку инкек кирек камăн чĕрине те вырăнтан хускатать. Çурлатри ялĕнче 1959 çулхи кĕркунне çут тĕнчене килнĕ Алексей 18 çул тултарсан мирлĕ вăхăтрах вăрçă вутне астивессе шутланă-ши? Ашшĕ-амăшĕн çулсем иртсен тракторист пулас ĕмĕтпе пурăннă хăйсен пепкин алла пăшал тытса çĕршыв интересĕсене хÿтĕлеме тăма тивесси пирки шухăш пулнă-ши? Çук, паллах.

Виçĕ ачаллă хресчен çемйинче хăй асли пулнăран Алексей Ефремовăн ачаллăх ĕçе çывăх ÿсме тивнĕ: Е.Андреев яч. хис. хуçалăхăн уй-хир бригадинче ашшĕ-амăшĕпе пĕрле акана хутшăннă, утă çулнă, çум çумланă, улăм пуçтарнă т. ыт. те. Çак ĕçсенче вăл икĕ йăмăкĕшĕн тĕслĕх пулса тăнă.

– Ÿркенмене пурнăç хăй вĕрентсе пырать. Çак чăнлăх ман тĕле тÿрремĕнех тухрĕ. Шкулта вĕреннĕ вăхăтра манăн пĕр тĕллевчĕ: вĕренсе пĕтерсен кÿршĕллĕ Советскинчи профтехучилищĕре тракториста вĕренмелле, çынсенчен кая юлмасăр тырă-пулă акмалла-пуçтармалла, çĕр-аннемĕр пулăхлăхне ÿстермелле, – хăйĕн ачалăх ĕмĕчĕсемпе паллаштарчĕ Алексей Алексеевич. – Анчах аттен Тутар Республикинче пурăннă пиччĕшĕ тухтăра вĕренсен ĕмĕрĕпех çынсене пулăшма пулать тени те çамрăк пурнăçăмра хăйне евĕр йĕр хăварчĕ. 18 çул тултарсан кĕтмен-туман çĕртен çак йĕр пурнăçа тепĕр майлă çавăрса хучĕ.

Муркашри вăтам шкултан вĕренсе тухнă Алексей юлташĕсем пурте хулана вĕренме кайнă чух çара кайиччен ДОСААФ урлă водитель специальноçне алла илес ĕмĕтпе районти çар комиссариатне пырать. «Водительсем хатĕрлесси пирки чĕнни çук, анчах ĕнер çара валли медицина ĕçченĕсем хатĕрлес тĕллевпе 5 çамрăка Шупашкарти медицина училищине фельдшера вĕренме ямалли пирки сĕнÿ килчĕ. Çамрăкăн куçĕ умне ашшĕпе пĕрле ĕçленĕ арçын тракториста мар, трактор тăвакана вĕренмелле тени тухать. Çурлатри каччи, медицина тĕрĕслевĕ витĕр тухса, медучилищĕне вĕренме кĕме экзамен тытать.

Шкулта вĕреннĕ чух çарпа патриотизм тематикипе çырнă кĕнекесене вулама юратнă каччăн медучилищĕри 2 çул çурă сисĕнмесĕрех иртсе каять. Аслисен ĕçне малалла тăсакан каччăн çĕршыва сыхлассинчен пăрăнасси шухăшра та пулман. Çапла вара фельдшер дипломне алла илнĕ каччă пĕр уйăх районти тĕп больницăн васкавлă пулăшу уйрăмĕнче ĕçленĕ хыççăн 1980 çулхи çуркунне совет çарне тăрать. Инçет Хĕвел тухăçĕнчи чикĕ хуралне службăна лекнĕскер, çур çул малтан пирĕн çарсем Афганистана кĕнине те илтмен-тĕр, анчах...

Икĕ çул хушшинче санитари чаçĕнче, медпунктра, заставăра çĕршыв умĕнчи тивĕçе ăнăçлă пурнăçланă каччăна командирсем çар службине прапорщик ретĕнче малалла тăсма ыйтсан та пирĕн ентеш хирĕçлемест.

– Прапорщика юлсан манăн çар заданийĕсенче пулса курас ĕмĕт çуралчĕ. Ахальшĕн мĕнле çар çынни-ха эпĕ? Çитменнине çемье те çавăрман. Çапах Афганистана каймă ят тухсан чунра лăпкă марччĕ. 1984 çулхи февральте Инçет Хĕвел тухăçĕнчи Бикин хулинчен Мускав урлă Ашхабада кайнă чух Мускавра Ленин мавзолейĕнче пулса куртăм, хам вăрçа кайнине пĕлнĕрен пĕр кунлăха тăван киле кĕрсе тухрăм. Çăмăл марччĕ, анчах аннене нимĕн те каламарăм. Хам вара шăп та лăп икĕ çул пултăм Афганистанра. Нумай колоннăна Кабула ăсатрăмăр, çапăçу хирĕсенче аманнă салтаксене пулăшрăм. Çакна курма вара питех те хăрушăччĕ. 19 çулхи каччăсем: «Прапорщик юлташ, эпĕ чĕрĕ юлăп-ши?..» – тесе куçран тинкеретчĕç те, лăплантараттăм вĕсене. «Хăрушши хыçалта ĕнтĕ», – теттĕм. Хамăр вара медицина пулăшăвĕ пама уйăрнă БТРпа тепĕр вырăна тепĕр салтака пулăшма васкаттăмăрччĕ. Вăрçă вăрçах ĕнтĕ. Икĕ çул хушшинче пирĕн чаçри 6 салтак киле цинк тупăксемпе «вĕçсе кайрĕç», – хурланса калаçрĕ çартра 1998 çулччен пулнă Алексей Алексеевич.



Пирĕн салтаксем Афганистанти çар условийĕсенче (1985 çул).

Афганистан хыççăн 1985 çулта «Çарти паттăрлăхшăн» медальпе наградăланнăскер, 1986 çулта Анаткас Апаш хĕрĕпе Луизăпа çемье çавăрать. Мăшăрĕпе пĕрле Луиза та 8 çул службăра пулать. Паян вĕсен 3 ача. Асли – Женя – ЧПУ пĕтернĕскер, Хура тинĕс флотĕнчи çар карапĕ çинче службăра. Иккĕмĕшĕ – Сергей – мастер-строитель. Анна вара 5-мĕш класра вĕренет.

– Арçыннăн йывăрлăхсенчен хăрама юрамасть. Çĕршыв умĕнчи тивĕçе пурнăçлассинчен те пăрăнмалла мар. Паян сана питех те лайăх пулĕ, анчах хăвăнпа юнашар тулли куççульлĕ çынсем тăма пултараççĕ. Ан ман вĕсем пирки самантлăха та, – терĕ сыв пуллашнă май манăн çĕнĕ пĕлĕшĕм.

Анатолий БЕЛОВ.